# НИКАМА ТА МАНМАН, НИМĔН ТЕ МАНĂÇМАН

## Пĕрле ӳснĕ паттăр тантăшсем

**1941 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнче тунă сăн ӳкерчĕкрен Москакасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкас Хачăк каччисем пăхаççĕ (сулахайран сылтăмалла): Лонгин Васильевич Романов, манăн атте Алексей Игнатьевич Бирюков тата Петр Степанович Данилов. Мĕн кĕтет вĕсене умра, мĕн чăтса ирттерме тивет – нихăшин çине те хурав çук. Çĕнĕ пурнăç аталаннă, хресчен коллективлă хуçалăха пĕрлешнĕ вăхăтра çуралса ӳснĕскерсем вăрçă мĕнне курман, ăна аслисем каланинчен çеç илтнĕ. Халĕ вара... Нимĕç фашисчĕсем мирлĕ пурнăça сĕмсĕррĕн татса пирĕн çĕршыва вăрçăпа тапăнса кĕнĕ.**

Фронта тухса каяс умĕн пĕрле сăн ӳкерттернĕ юлташсен кун-çулĕ пирки. 30 – 35 кил хуçалăхран тăнă Вăрманкас Хачăкра 1929 çулта пулнă вăйлă пушарта çур ял çунса кĕлленнĕ. Кил-çуртсăр юлнисенчен таса уйра çĕнĕ пӳртсем лартса Ивановка ялне пуçарса янă. Куçса кайнисем хушшинче Петрпа Лонгин çемйисем те пулнă. Ачаран пĕрле ӳснĕ çамрăксен çитĕнерехпе туслăхĕ те çирĕпленнĕ çеç.

Мĕнле пулнă-ха вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухнă вĕсен пурнăçĕ? Аслă Çĕнтерӳ 75 çул тултарас умĕн манăн вĕсен кунçулĕ пирки хам пĕлнине каласа парас килнипе алла ручка тытрăм.

Л. Романов хресчен çемйинче 1920 çулхи нарăс уйăхĕн 5-мĕшĕнче çуралнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине вăл ашшĕпе Василийпе пĕрле хутшăннă. Лонгин вăрçă хирне 1942 çулхи раштав уйăхĕнче кĕнĕ. Пирĕн ентеш стрелоксен Украинăри 266-мĕш дивизийĕнче çапăçнă. Фронтри çар званийĕ – сержант. Вăрçă йывăрлăхĕсемпе хăрушлăхĕ чăваш каччине хăратман. Вăл яланах малтисен ретĕнче пулнă, тăшмана тăхлан çумăрпа çунтарнă. Хӳтлĕх шыраманскер, çапăçусенче вилĕмпе куçа-куçăн тăрса темиçе хутчен те аманать. 1944 çулхи январь уйăхĕнче пирĕн ентеш ĕнсине снаряд ванчăкĕ лекет. Йывăр суранланнăскерне Грузири госпитале хураççĕ. Эрне хушши тăнсăр выртнă салтак врачсемшĕн сывалассăн туйăнман. Анчах фронтри йывăрлăхсенчен хăраман каччă ку хутĕнче те вилĕме çĕнтерет. Çур çул госпитальте юсаннă хыççăн ăна киле яраççĕ. Суранланнине пăхмасăрах ялта та алă усса ларман вăл: вăй çитнĕ чухлĕ ĕçленĕ, çамрăксене патриот воспитанийĕ парассипе тимленĕ. Лонгин пиччен (ялта ăна Ленька тесе чĕнетчĕç) фронтри наградăсем те самаййăн. Вăл 1983 çулта пурнăçран уйрăлчĕ. Иртнĕ уйăхра паттăр ентеш çурални 100 çул пулчĕ.

Унăн мăшăрĕ паян кун та пурăнать. Елизавета Петровнăна халĕ 94 çул. Сывлăхĕ начартарах пулсан та, вăл нăйкăшнине никам та илтмен. Ачисемпе тата вĕсен çемйисемпе савăнса çеç кун кунлать вăл. Вĕсем ăна лайăх пăхаççĕ, ĕçченскерсем вылĕх-чĕрлĕх те йышлă тытаççĕ.

Сăпайлă мăшăр – Лонгинпа Елизавета – ĕçрен пăрăнмасăр пурăнса 3 ывăлпа 2 хĕр çуратса ӳстернĕ. Паянхи куна 4 ачи, 4 мăнукĕ, 3 кĕçĕн мăнукĕ ăрăва малалла тăсаççĕ.

Тав сире, Василий асаттепе Ленька пичче тата Лиза аппа! Вăрçăра çапăçса, тылра ырми-канми ĕçлесе çамрăк ăрăва сыхласа хăварнăшăн, пирĕн пулас çулсене уçса панăшăн.

Манăн атте А. Бирюков 1922 çулхи ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Çĕршыври пĕтĕм халăх пекех унăн та 1941 – 1945 çулсем шăпа пӳрнĕ йывăр тапхăр шутланаççĕ. Тĕрлĕ вăхăтра фронта вĕсем ашшĕпе Игнатий Ефремович Ефремовпа иккĕшĕ те тухса кайнă. Тăхлан çумăр айĕпе çĕнтерĕве çывхартнă.

Атте вăрçăра танкист пулнă. Малтанхи пысăк çапăçу унăн Сталинград хулишĕн пулнă. Пĕррехинче атте тытса пыракан танк мина çине лекет, çунма пуçлать. Контузиленнĕ атте тăнне çухатиччен танкран тухса ӳкме ĕлкĕрет. Çав çапăçу хыççăн чылай хушă госпитальте сипленет. Малтанах командирсем ăна сывă юлнă тесе шутламанран яла унăн вилнĕ хучĕ те çитнĕ. Госпитальтен сывалса тухсан, вăл кĕске вăхăта киле те килсе кайнă. «Çунса каясран мана тăлăп çăлса хăварчĕ», – тенĕ вăл тăванĕсене.

Каялла фронта таврăнсан атте Украина çĕрне фашистсенчен хăтарнă çĕрте çапăçнă. Унтан вĕсен çар чаçĕ Польшăна ирĕке кăларма хутшăннă. Çавăнта вăл Уйкас Хачăкран фронта кайнă Валериан Кузьмич Шарова (малтан унăн хушамачĕ Парандеев пулнă) ăнсăртран тĕл пулать.

– Парандеев! Парандеев! – тесе кăшкăратăп тет атте.

– Ку хамăр патăмăрти çын-и? – тесе пăхкалать тет лешĕ.

Çав тĕл пулуччен икĕ талăк чарăнмасăр пынă çапăçура пулнă аттен сăн-пичĕ паллама май çук таса мар пулнă. Шаров, штабра ĕçленĕрен, аттене пĕр котелок апат илсе килсе çитернĕ. Иккĕшĕ те аса илетчĕç çавна кайран.

Атте вăрçă çинчен калаçма юратмастчĕ. Çĕнтерӳ кунĕ чухне вара хамăр ялти Павел пиччепе пулни-иртнине пирĕн умра аса илсе ларатчĕç. Вĕсем вăрçăра иккĕшĕ те танкист пулнă. Кунта вĕсем калănă пĕр пĕчĕк истори çинчен каласа хăварам-ха.

Хĕвел анăçнелле тапăнса пынă чух черетлĕ атакăра çĕнтернĕ хыççăн пирĕн салтаксем фашистсенчен юлнă спирт пичкине тупаççĕ. Трофей савăнтарнă ĕнтĕ, салтаксем ăна çĕнтерӳшĕн тесе ĕçнĕ пулас. Вăхăт иртсен çав кунах тăшман черетлĕ атакăна çĕкленет. «Йывăр килчĕ пирĕннисене ун чух. Нумайăшĕн пуç хучĕç вăл çапăçура. Фашистсем спирт пичкине ятарласа пăрахса хăварнă пулас çав», – тетчĕ кун пирки нумай медаль-ордена тивĕçнĕ атте.

Вăрçă хыççăн вăл колхозра шофер пулса ĕçлерĕ. Фронтра сывлăх çухатни ахаль пулмарĕ: 48 çулхи атте 1970 çулта пурнăçран уйрăлчĕ.

Аттепе пĕрле Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче унăн ашшĕ Игнатий Ефремович Ефремов та пулнă. Фронтран контузипе таврăннă салтак нумай пурăнайман, мăшăрĕпе иккĕшĕ те 1946 çулта пурнăçран уйрăлнă.

Анне, Матрена Васильевна, сутуçăра тата пĕрлешӳллĕ хуçалăхра нумай ĕçленĕ. Тыл ĕçченĕ пулнă май, вăрçă тапхăрĕ пирки унăн аса илĕвĕ чылайччĕ. «Вăрçă вăхăтĕнче йăлтах фронт валли тата çĕнтерӳшĕн тесе тăрăшаттăмăр. Выçлăхпа нушаланни те сахал мар пулнă. Ăна çĕнес тесе



мăян, йывăç кăчки, шăннă çĕр улми çиеттĕмĕр», – тетчĕ вăл.

Ултă ачана пурнăç панăран, атте вилсен пурте анне тăрăшнипе тата хамăр пĕр-пĕрне тĕкĕ панипе пурнăç çулĕ çине тухрăмăр. Пĕрле пулсан пурăнмалли çĕнĕ çурт лартрăмăр. Атте-аннен тымарĕ çирĕп пулчĕ: 6 ача, 16 мăнук, 17 кĕçĕн мăнук. Вĕсем татах йышланасса та шанатăп.

Кĕскен аттен йăмăкĕсем пирки те каласа хăварас килет. Вĕсем – тыл ĕçченĕсем. Мария аппа 2017 çулта 94 çула çитсе пурнăçран уйрăлчĕ. Анна аппа вара 82 çула çитиччен (2016 çул) пурăнчĕ. Кашнин çемйи пысăк. Тылра фронт валли ĕçленĕ, вăрçă вăхăтĕнче е ун хыççăн ачасем çуратса ӳстернĕ хĕрарăмсене пурне те пысăк тав.

Маларах асăннă салтаксен тантăшĕ П. Данилов Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине вĕсемпе пĕр вăхăтрах тухса кайнă, анчах вăрçă хирĕнче вăл хыпарсăр çухалнă. Унăн ашшĕ те Ленинград хулишĕн пынă çапăçусенче пуç хунă. Унпа пĕрле çапăçнă хамăр ентеш каланă тăрăх, Степан пичче (Петрăн ашшĕ) вилмеллех амансан та малалла виçĕ утăм туса ӳкрĕ тет.

Килте Петрăн шăллĕ Иван юлнă. Вăл та Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăнма пултарнă, хăйĕн тивĕçне Хĕвел тухăçне самурайсенчен тасатнă çĕрте пурнăçланă. Вăрçă хыççăн çемье çавăрса Иван пиччепе Аня аппа 3 ывăлпа 3 хĕр çуратса ӳстернĕ. Паян вĕсен 14 мăнукĕпе йышлă кĕçĕн мăнукĕ паттăрсен ăрăвне малалла тăсаççĕ.

Тюмень облаçĕнче пурăнакан Михей шăллĕн пысăк çемйи те – Даниловсен ăрăвĕн çирĕп тĕкки.

Петр Степанович! Эсир Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн çамрăклах пуç хунă пулсан та, сирĕн ăру йышлăн аталанать. Ял-йыш та, тăванусем те сире тата сирĕн паттăрлăха манмаççĕ.

АВТОРТАН. Мĕншĕн-ха эпĕ çак салтаксен ăрăвĕ пирки тĕплĕнрех çырас терĕм? Мĕншĕн тесен Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисем ăна тивĕç. Мĕншĕн тесен вĕсем юратушăн, çамрăк ăрăвăн малашлăхĕшĕн, çĕршыв аталанăвĕшĕн атакăна çĕкленнĕ, çапăçăва кĕнĕ, çамрăкла пуç хунă. Паян вĕсен ăрăвне тăсакансем çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче ĕçлесе пурăнаççĕ. Пурте телейлĕ пулăр!

**Р. СОЛОВЬЕВА.**

## Тăшмана çĕнтернĕ, мирлĕ пурнăçра та хастар пулнă



Манăн атте Нискассинчи В. Никитин (**сăн ӳкерчĕкре**) Балтика тинĕс флотĕнче «Киров» крейсер тата «Марат» линкор çинче çар тивĕçне пурнăçланă. 1935 çулхи февраль уйăхĕнче ăна салтака илсе кайнă. «Эпĕ – арçын, Тăван çĕршыва хӳтĕлеме тивĕç, маншăн ан кулянăр», – тесе уйрăлнă вăл хăйне ăсатакансемпе тăван килтен тухса кайнă чухне. Çар ретĕнче 5 çул иртнĕ. Декабрь уйăхĕнче яла таврăннă та строительсен бригадин ертӳçинче ĕçленĕ.

1941 çулта вăрçă пуçлансан çар ретĕнче пулнă салтак çĕршыва хӳтĕлессинчен аякра юлма пултарайман, пĕрремĕш чĕнӳпе çĕршыва хӳтĕлеме тухса кайнă. «Сывă юл тăван ял-йыш, пирĕн çинчен ан манăр. Эпир çĕнтерӳпе кăна таврăнăпăр, эсир кĕтĕр», – тесе каллех ял-йышпа сывпуллашса тухса кайнă.

В. Никитин Хура тинĕс флотне лекнĕ. 1942 çул вĕçĕнче Кавказа хӳтĕлес çапăçусенче Хура тинĕспе Азов çар флотилийĕсен партизанĕсемпе подпольщикĕсем хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Пĕррехинче Варсонофий пулнă карап Новороссийск хули патнелле çывхарса пынă чухне тӳперен тăшман сиенлетнипе путма пуçланă. Суранланнă Варсонофий тăварлă тинĕсе ӳксе 2 талăк выртнă, алли-урине йăлтах тăварлă шыв шăтарса кăларнă. Баку хулинчи госпитальте кăна тăна кĕнĕ вăл. Госпитальте сипленнĕ хыççăн каллех хăйне фронта яма ыйтнă. Ăна Хура тинĕс флотĕнчи пĕр уйрăмăн командирĕ пулма çирĕплетнĕ.

Новороссийск хулине тăшманран хăтарассишĕн çапăçусем пынă. 30 тăваткал километрти хĕрӳ çапăçу 225 куна тăсăлнă. Кăшт каярах çавăн пекех Одесса, Керчь, Севастополь хулисене ирĕке кăларнă. Çар ĕçĕсенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна «Хĕрлĕ Çăлтăр» орден, «Кавказа хӳтĕленĕшĕн», «Германие çĕнтернĕшĕн» медальсем парса чысланă.

Дунай флотилийĕнчи пĕр уйрăмăн командирĕ Варсонофий, вăрçă вĕçленнĕ пулин те, киле тӳрех таврăнайман. Ăна тепĕр 2 çул çамрăк моряксемпе командирсене вĕрентсе çар ĕçне хăнăхтарма çирĕплетнĕ.

Яла таврăнсан ăна колхоз ертӳçи пулма шаннă, территоринче çĕнĕ объектсем хута кайма тытăннă: сакăр çул вĕренмелли шкул, ĕне, сысна, чăх-чĕп фермисем çĕкленнĕ. Вăл хăйне ыттисемпе танах тытнă, вĕсемпе пĕрле ĕçленĕ, пĕрене йăтнă, пăта çапнă тата ытти те. Çынсен шухăшне, сĕнĕвне атте яланах шута илнĕ, ĕç пуçлассине вĕсемпе сӳтсе явнă. Унăн çывăх тусĕ тата канашçи «Знамя труда» колхоз ертӳçи Е. Андреев пулнă.

Унăн ăсталăхĕпе тăрăшулăхне часах çӳллĕ шайри ĕçченсем асăрханă. Каярах ăна Шупашкар хулинчи ертӳçĕсен кадрĕсене хатĕрлекен шкула ĕçлеме чĕннĕ. Вăл тăрăшнипе унтан ăста специалист чылай тухнă.

**Р. КОЛЕСНИКОВА.**

*Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.*